## Анатолий ЮМАН

# Ухсай пичче шкулĕ



Писатель çырнисен пуххинче ун çырăвĕсем те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пурăнна чух тĕрлĕ сăлтавпа çырнăскерсем, вăхăт иртнĕ хыççăн та вĕсем хайсен пĕлтерĕшне çухатмаççĕ, вулакансене илемлĕ хайлавсем пекех кăсăклантараççĕ. Писатель биографийĕн уйрăм пайĕ пулнăран, унăн пултарулăхне, кăмăл-сипет пуянлăхне, интеллект шайĕпе тавра курăмне, ăсталăхĕн вăрттăнлăхне тарăнрах туйса илме пулăшаççĕ. Çырма пуçлакан авторсемшĕн вара ăсталăх шкулĕ те пулса тăраççĕ. Аслисен опычĕ сывлăш пекех кирлĕ ĕнтĕ вĕсене.

Пултарулăх çулĕ çинче манăн сахал мар паллă чăваш писателĕсемпе çыру çӳретме тӳр килчĕ. Перифери тунсăхĕнче çав çырусем манăн пурнăçа вăштăр çил пекех уçăлтарса тăратчĕç. Вĕсен хушшинче чăваш халăх поэчĕ Ухсай Яккăвĕ çырнисем те пур. Чăваш литературин улăпĕсенчен пĕри тетпĕр эпир ăна. Ку вăл çаплах ĕнтĕ. Унпа тĕл пулса паллашма тӳр килнĕрен эпĕ хама телейлĕ тесе шутлатăп. Ку вăл маншăн, чăнах та, ăсталăх шкулĕ те пулнăçке.

Акă вăл, çав улăп, пиртен уйрăлса кайнăранпа та чылай вăхăт иртрĕ. Поэзири аслă пичче çинчен эпĕ пичетре пĕр хутчен мар аса илсе çырнă-ха. Халĕ, вăл çуралнăранпа 95 çул çитнĕ май, вулакансене унăн çырăвĕсемпе паллаштарас килет. Пурĕ 11 çыру. Малтанхине – 1977 çулхи августăн 7-мĕшĕнче, юлашкине 1985 çулхи апрелĕн 5-мĕшĕнче çырнă. Вĕсем, манăн СССР Писателĕсен Союзне кĕрессипе, ал çырури тата хаçатсенчи хăш-пĕр сăвăсене тишкерсе хак панипе тата Шупашкарти чăваш кĕнеке издательствине ĕçлеме куçас кăмăл-туртăмпа (унта куçма мана Валем Ахун редактор йыхрав тунăччĕ) çыхăннăскерсем, ашшĕ ывăлне е пиччĕшĕ шăллĕне вĕрентсе каланă халал пек туйăнаççĕ.

Калас сăмахне вăл яланах тӳррĕн, сăнарлăн та кăмăл çемми май шӳтлесе каланине ăна курнă-пĕлнĕ çынсем тĕрĕс палăртаççĕ. Ку вăл унăн ман пата çырнă çырăвĕсенче те курăнать. Вĕсенче

АХРĂМ

**хĕрсе кайса, çав вăхăтрах хăйĕн хакне пĕлсе хытă каланисем те тĕл пулаççĕ.**

**Чирлĕ те вата алпа çырнă çав çырусенчи хăш-пĕр сăмах çавранăшĕсене вуласа каларма та çăмăл мар. Ун пек вырăнсене эпĕ тăваткал скобка ăшне хупса хăваратăп.**

**Писательсен Союзĕн ун чухнехи Уставĕ тăрăх, Союз членне ку е вăл автор ĕçлесе пурăннă вырăнти организацире пăхса тухса йышăннă. Пурĕ виçĕ рекомендаци кирлĕ пулнă. Эпĕ çав шантарса çырнă хутсенчен пĕрне унччен лайăх паллашма ĕлкĕрнĕ Ухсай Яккăвĕнчен ыйтса илме хăюлăх çитертĕм. Пĕлекенсем каланă тăрăх, кун пек ĕçре унăн критерийĕ пысăк пулнă. Çапах та ятлă-сумлă поэтăмăр хуравне вăрах кĕттермерĕ, кирлĕ хута ярса та пачĕ. Акă вăл, çав малтанхи çыру:**

«Август, 7, 1977.

Шăллăм.

Эпĕ тин çеç больницăран тухрăм та кирлĕ пек хут татăккине ярса паратăп.

Благова манран сывлăх сун. Вăл пуçĕпе ăслă, чунĕпе илемлĕ çын. Чĕмпĕре пырса тухасшăн çунатăп. Ислюков пĕрле пырасшăн калаçать, хăй вăхăт тупаймасть.

Чипер пурăн, пăртакçă çеç мухтан, ытлашши мар.

Я.Ухсай».

**Ун чухне Союз членне йышăнас ыйту чылай чухне пăтăрмахлă пулса тухатчĕ, ăна татса панă чух интригансем тупăнсах пынă. Манпа та çаплах пулса тухрĕ. Усал сунакансен сивĕ пăрне Ухсай Яккăвĕн, унпа пĕр шухăшлă пулнă Стихван Шавлипе Юхма Мишши витĕмĕ те ирĕлтерейменрĕ. Иккĕмĕш «заходра» Яков Гаврилович патне кайса килмелле пулчĕ. Вăл хăйĕн сĕнĕвне çĕнĕрен алă пусса çирĕплетрĕ.**

**Черетлĕ çырупа пĕрле эпĕ Ухсай пичче патне хамăн çĕнĕ ал çырăвне ярса панăччĕ. Хуравĕнче: «Ку çыру хăвна валли анчах», – тесе асăрхаттарни пур. Çавăнпа ăна вулакан умне кăларасшăн мар. Çапах та юлашкинчен панă канашĕсем ку чухнехи çамрăк авторсене те усăллă пуласшăн туйăнать. Çырăва поэт çапла вĕçлет:**

«Кĕнекӳне ытлашши ан юса, хăвна ху судья пул, редактор та, Турă та пул. Сăввусене куçпа пăх, чĕрӳпе туй, хăлхупа итле. Вара пурте тĕрĕс пулĕ».

«Декабрь, 13, 81.

Анатоли шăллăм,

сана, Репина тата ытти çынсене, пурне те, Силпире каларăшле, манран мерттес! *(В.М.Репин – Ульяновск облаçĕнче чăвашлăх юхăмне сарса янă пуçаруçăсенчен пĕри, чăваш халăх академикĕ. – А.Ю.)*

Шупашкарта ман çуралнă куна пĕтĕм халăх сума сусан та, литературăри этемккесем хутшăнсах каймарĕç, айккинче тăрса юлчĕç [...].

Чĕмпĕрте мана ырă сăмахпа асăнни чуна савăнтарать.

Сывлăх сунатăп, йывăр пулсан та, сулу çинче ан такăн.

Ыран Мускава тухса каятăп – асăнмалăх билет вырăнне пĕр хут ил! *(Çырупа пĕрле вăл буклет чиксе янă. – А.Ю.)*

Павлина *(Кун пек автора эпĕ астумастăп. – А.Ю.)* сăвă çырнă тесе пĕлтерчĕç редакцирен. Хам сăввине вуламан пулин те, ăна ман ятпа пуç тай.

Я.Ухсай».

«Январĕн 31, 82.

Анатоли шăллăм,

илĕм-тилĕм ирхине сиксе тăтăм та сана аса илтĕм. Çывăрма выртас умĕн санăн çыруна вуланăччĕ. Пуç миминче санăн сăмахусем тăрса юлнă.

Каллех çыруна ярса илтĕм. Пуплевсем чăн-чăн Чĕмпĕрле юхса пыраççĕ, пĕр вырăнне тиркеме çук, пурте тĕрĕс те тĕкел. Мĕншĕн эсĕ сăввусене çапла çырмастăн-ши, мĕншĕнех ху пĕлсе тăрсах рифмăсем хыççăн хăваласа шухăшсене

пĕчĕклетсе хĕстеретĕн-ши? Эпĕ сан ҫырăвусене питĕ витĕр курса ăнланатăп, сăввусенче такăнатăп. Ҫырăвусенче эсĕ – Чĕмпĕр чăвашĕ, сăввусенче вирьялланса каятăн. «Ялавпа» «Тăван Атăлта», «Хатĕр пулта» темĕнле пăх-шăк та ҫапăнса тухать. Сан та вĕсене пăхса тĕппипе хăвăн аҫу-аннӳн чĕлхине пăсмалла мар [...]. Хвети пек пул, хăвăн чĕрӳпе калаҫ. Синичкин *(манăн алҫырăвне таварса панă редактор. – А.Ю.)*, ăнсăртран редактора пырса кĕрсе ларнăскер, сана тем те калĕ. Вăл Элĕк районĕнче ҫуралса ӳснĕ, эсĕ Чĕмпĕрте [...].

Эпĕ пĕр чĕптĕм те усал тăвасшăн мар, чăн-чăн поэт пек курас килет, ҫавăнпа хытăрах ҫыратăп, кăмăлна та хуҫатăп пулĕ. Эсĕ ман пирки

Сиксе тухрĕ ҫырмаран,

Пĕкке хуҫрĕ ҫурмаран

теме пултаратăн, тарăхăн. Эпĕ сана хуҫасшăн мар. Эсĕ хăвна ху хуҫнине кăна хирĕҫ. Аҫу-аннӳн ҫулĕнчен пăрănса ан ут, вĕсем пек калаҫ, вĕсем юратмалла ҫыр. Чăваш литературине халĕ тем [ле] те йĕрĕнчĕк кĕрсе тулчĕ. Чĕлхе пĕлменнисем така ҫăмарти пек хулăн романсем ҫыраҫҫĕ. Така ҫăмарти, ăшаласа пĕҫерни, питĕ тутлă. Роман та, сăвă та вулакана [ҫеҫ] тутлă каламаҫҫĕ.

Ан пăшăрхан, пуҫна ан ус, йывăр пулсан та тӳс. Литературăна пырса кĕнĕ ҫăмăлттайсем, членсем халĕ ҫĕр ытла. Шут ӳссех пырать, литература чакать каялла та каялла, ту тăрринчен кустарса янă [юр] купи пек мăнланса пырать, сапаланса каймасть.

Ним тума та ҫук.

Сывлăхпа ырă пурнăҫ сунса – Я.Ухсай».

«Сентябрь, 25, 83.

Шанчăклă тусăм,

санăн ҫыруна, Ленин ашшĕн гранитри ӳкерчĕкне илтĕм. Мерттес сана.

Ленин ашшĕпе Яковлев пек ҫынсем ҫинчен Горький «Ломовые лошади просвещения» тесе ҫырнă.

Эпĕ сан пирки обкомри ҫынсемпе калаҫрăм, сире те пурнăҫпа политикăна чунĕпе ăнланакан ҫынсем кирлĕ терĕм, сан ятпа калаҫрăм. Хваттир пирки Емельяновпа калаҫăп, ăна, ун ҫамки кашкăрăнни пек пулсан та, ӳкĕте кĕртме тăрăшăп.

Сирĕн пата пырса тухма май килмест, кут хыҫма та вăхăт ҫук.

Икĕ Романова та пуҫ таятăп. *(Романов тăвансем Чăнлă районĕнчи пĕри КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕнче, тепри райхаҫат редакторĕнче ĕҫлетчĕҫ. Вĕсемпе Ухсай Яккăвĕ Чăвашкассинчи И.Я.Яковлев уявне килсен паллашнăччĕ. – А.Ю.)*

Хальлĕхе сывлăх сунатăп, малалли хăвăнтан килет.

Я.Ухсай».

«Октябрь, 9, 83 ҫ.

Ҫамрăках мар тусăм, савăнса тепĕр хут ҫамрăкланма манăн статьяна вуласа тух та Чăвашкасси музейне пар. *(1983 ҫулхи май уйăхĕнче Чăвашкассинче И.Я.Яковлева чысласа ирттернĕ уява килсе кайнă хыҫҫăн поэт республикăри тĕп хаҫатра пысăк статья ҫапса кăларнăччĕ. – А.Ю.)*

Сана ĕҫе чĕнес пирки обкомра Петровпа калаҫрăм. Краснов тытăнса тăрать. Эпĕ ăна ӳкĕтлеме «Ульяновская правда» хаҫат патăм – унта сан портрету пур. Малалла мĕн пулĕ.

Хваттир. Емельяновпа калаҫрăм. Пурте пăхма чипер, чунĕсемпе питĕ кутăн.

Я.Ухсай».

«Октябрь, 18, 83.

Ĕҫчен тусăм,

сана, хаҫатна та, Слакпуҫле каласан, мерттес!

Сана ĕҫе чĕнес пирки эпĕ обкомăн пĕрремĕш секретарĕпе Илья Павловичпа калаҫрăм. Вăл килĕшрĕ, ҫырса юлчĕ. Хваттир халех илме пулатчĕ, вырăнсем правленири хутсем ҫинче пур. Миҫе пӳлĕмли кирлĕ сана?

Нумай çырма вăхăтăм та, шухăшăм та çук.

Сывлăхна сыхла!

Якку пиччӳ.

[...] Эпĕ çакă кун ирхине 37 çулта вилме инкеке пырса лекнĕччĕ.

Издательство директорĕ халĕ Мускавра. Вăл килсе çитсенех ăна ĕнсинчен ярса илĕп».

«Октябрь, 31, 83.

Аптраса ӳкнĕ шăллăм,
сана ĕçе илес пирки пур кирлĕ çынпа та калаçрăм, хирĕççи пулмарĕ, пĕр кутăн çын – Издательство директорĕ [...] тăрса юлчĕ. Вăл халĕ Мускавра-ха. Сымкин сана вăхăтлăх хăйĕн хваттерне яма килĕшнĕ. Сымкинăн хысна машини пур – вăл сана лартсах илсе килĕ. Ман пурнăçра шухăшлаттаракан хыпар-хăнар хальлĕхе çук.

Я.Ухсай».

«28.08.1984.

Анатолий шăллăм,
мана Мускавран килнĕ-килменех санăн çырăву хаваслантарчĕ. Мускавра Благова тĕл пултăм. Вăл Саратовра благо текен вырăнне курман пулас, редактортан тухнă, тарăхса пурăннă-мĕн, ватăларах кайнă, çӳçĕ тăнлавĕсенче кăвакарнă.

Эпĕ Рогачева çырса янăччĕ. *(Яков Рогачев Димитровградри хаçатра ĕçлесе пурăннă чăваш писатель-журналисчĕ. – А.Ю.)* Вăл хăй генерал пирки *(кунта Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче палăрнă Буданов генерал çинчен сăмах пырать. – А.Ю.)* чăвашла та, вырăсла та пысăк очерк çырма килĕшнине пĕлтерчĕ. Эпĕ ăна вырăсла çырнăччĕ, вăл шăкăр-шăкăр тирпейлĕ чăвашла çырни савăнтарчĕ. Вăл республикăри чăвашсем çинчен ăста очерксем çыра-çыра пырсан, кунти редакцисене те, хăйне те илемлĕ усă кӳрĕччĕ, вăл хăй яланах пурнăçри вак-тĕвексене сапласа пыма укçаллă пулĕччĕ.

Эсĕ, ачам, çырнă чухне чĕлхе тути-масине асăрха. «Редакцисенче ăçта мĕнле япаласем выртни çинчен аса илтертĕм», – тетĕн. Кунта çинчен сăмах кирлĕ мар, «выртнисене» тени вырăнлă.

Сывлăх сунатăп.

Я.Ухсай.»

«Сентябрь, 11, 1984.

Анатолий шăллăм,
сана, хăвăн шухăшланине итленипе анчах, Шупашкара куçарса килес теттĕм. Ачу-пăчусене хăвăн килӳ-çуртунта ырă-сывă хăварассишĕн тăрăшни санăн ĕмĕтӳ пулни питĕ аван. *(Шупашкара куçса каяс ĕмĕт епле путланса ларни çинчен эпĕ «Геннадий Айхи тĕнчи» эссере çырса кăтартнăччĕ. – А.Ю.).* Шупашкарта тăлăх пурăнни чăнах та сана эрлентерĕ, пурнăçри тĕллевне сапалантарĕ, литература ĕçĕ те савăнтармĕ. Эпĕ кун пирки шухăшланăччĕ, аптăранипе кăна сана хаçатри йывăр ĕçрен, пĕр вăхăтрах чăвашла та, вырăсла та çырса хĕн-хур тӳсессинчен хăтарасшăнччĕ. Пуçа ӳксен – пушмак. Ним тума та çук.

Хăвăн йăвунтах пурăн, ачу-пăчуна пăх, мăшăрна та ан кӳрентер!

Сан хаçатунта Яков Рогачев Баданов генерал пирки тахçан ĕлĕк тухнăччĕ. Генерал Çĕнĕ Малăклă районне кĕрекен Мальен чăваш ялĕнче ӳссе çитĕннĕ тенĕччĕ. Ку факт чăнах та тĕрĕс пулсан, эсĕ Якку Рогачева ура çине сĕтĕрсе тăрат. Вăл ку чаплă генерал çинчен вăрăм çырса чăваш халăхне савăнтартăр! Якку ĕлĕк «Ульяновская правда» хаçатра ĕçленĕ.

Ăна вырăсла çырма çăмăлтарах. Питĕ тăрăшса çыртăр та мана ярса патăр. *(Я.Рогачев Баданов генерал çинчен çырнă пысăк очерк «Ялав» журналта çапăнса тухнăччĕ. – А.Ю.)*

Лăпкă пурăнатăп, çыравçăсемпе çыхланмастăп эпĕ, вĕсенчен хăратăп. «Волга» журналăн çиччĕмĕш номерне тупса вула. Унта манпа Твардовский çинчен каласа паракан пысăк статья пур.

Якку пиччӳ».

**Çĕршывра Горбачев пуç пулса ларнă çулсенче района тата хуçалăхсене нумай çулсем хушши ертсе пынă вырăнти пуçлăхсене улăштарасси хĕрсе**

**кайрĕ. Вĕсем пирки хаҫатсенче сенсациллĕ статьясем курăнма пуҫларĕҫ. Кунашкал улшăнусем пирĕн Ульяновск облаҫĕнчи Чăнлă районĕнче те пулса иртрĕҫ. Ҫавнашкал хыпарсене эп Ухсай Яккăвне те ҫырса пĕлтернĕччĕ. Ҫĕнĕ улшăнусене Яков Гаврилович пăшăрханса кĕтсе илнĕ. Ку вăл унăн ҫак юлашки ҫырăвĕнче те уҫăмлă сисĕнет:**

«Апрель, 5, 85.

Шăллăм,
санăн ҫырăву мана савăнтармарĕ. Ҫĕмĕрсе тăкасси питĕ ҫăмăл, ҫĕнĕрен никĕс хывасси, кайнисен вырăнне ҫĕнĕ ҫынсене, халăха валли юрăхлă кадрсем тупса лартасси йывăр. Тепĕр вырăнтан илсе килсе лартни ĕҫ мар, хут хыпарĕ.

Эсĕ ытла ан савăн, пуҫна ан каҫăрт, ҫӳҫне тимĕр турапа вирелле ан тура, нумай калаҫса [ан] ҫӳре. Романовсемпе ыттисем ҫирĕм ҫул ытла ахаль йĕм ҫĕтсе ларман, хӳйсем пĕлнĕ пек ĕҫленĕ: Романовпа ыттисен ҫитменлĕхĕ – хӳйсен вырăнне ларма пултаракан ҫамрăксене йывăр ĕҫ тума хатĕрлеменни. Эсир вĕсене хăвăр шухăшăрсене каласа тăма хайман, шухăша ярса ĕнсисене кăтăр-кăтăр хыҫтарман. Ун пек улшăнусем сирĕн патăрта кăна пулса иртмен. Пушкăртра Чăваш Пушпӳлек, Пелепей, Ауркасă районĕсенче киввисене хăваласа ячĕҫ те ҫĕннисене пырса лартрĕҫ [...].

Эсĕ Чăвашкассине шупашкарсене чĕнесси пирки ҫыратăн. Килеҫҫĕ, ĕҫеҫҫĕ, лăпăр-лăпăр сăвăсем вуласа параҫҫĕ. Кайран вĕсем килсе кайнисен пĕр йĕр те ҫук. Аякри чăвашсем ҫинчен пĕр очерк та ҫырса кăлармаҫҫĕ. Ун пек йĕксĕксене сĕркке теҫҫĕ.

Эпĕ хам пырса тухаймастăп. Пырас килет те – чирлĕрех. Унта Воробьев пĕр герой пур. Ăна салам кала. Ун пирки ҫырма пĕр лайăх ҫыракана ярасчĕ те – тупаймарăм-ха.

Я.Ухсай».

**Совет Союзĕн Геройĕ Егор Терентьевич Воробьев ҫинчен ҫырнă манăн «Паттăрлăх вăрттăнлăхĕ» кĕнеке 2002 ҫулта Ульяновскри «Печатный двор» издательствăра ҫапăнса тухрĕ. Унтах очеркăн вырăсла варианчĕ те пур.**



**Ӳкерчĕкре: 1983 ҫул. Чăвашкасси. И.Я.Яковлев уҫнă пуҫламăш шкул стени ҫинче Асăну хăми уҫăлнă уявра. Сулахайран сылтăмалла: А.Юман; Ю.Дмитриев, «Коммунизм ялавĕ» хаҫат фотокорĕ; Чăваш халăх поэчĕ Ухсай Яккăвĕ; А.Романов, райхаҫат редакторĕ; И.Хрусталев, «Ульяновская правда» хаҫатăн редакторĕн ҫумĕ; М.Соколов, райхаҫат фотокорĕ.**

**В.Дедушкин сăн ӳкерчĕкĕ**